25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942
МАЙ
12
ЫТЛАРИКУН
108 (6043) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитетӗнче

МТС трактористчӗсене тата тракторсенчен кӑкарса ӗҫлемелли ялхуҫалӑх машинисемпе ӗҫлекен колхозниксене ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне ӳстернӗшӗн ӗҫшӗн хушса тӳлесси ҫинчен

МТС трактористчӗсене тата тракторсенчен кӑкарса ӗҫлемелли ялхуҫалӑх машинисемпе ӗҫлекен колхозниксене ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне ӳстерме хавхалантарас шутпа, ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ҫапла йышӑннӑ:

1. Колхозсене, 1942 ҫултан пуҫласа, МТС трактористчӗсене, трактор бригадисен бригадирӗсене, вӗсен помощникӗсене, трактор ҫумне кӑкарса ӗҫлемелли ялхуҫалӑх машинисемпе ӗҫлекен колхозниксене тата заправщиксене СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗн 1941 ҫулти постановленийӗсем тӑрӑх ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне ӳстермелли плана ирттерсе тултарнӑшӑн колхозниксене тӳлемелле тунӑ йӗркепе, натурӑн е укҫан ҫакӑн чухлӗ хушса тӳлеме сӗнес:

ТЕШТЫРАСЕМПЕ ПАРҪА ЙЫШШИ КУЛЬТУРАСЕМ ТӐРӐХ. Трактористсене, трактор бригадисен бригадирӗсене, вӗсен помощникӗсене, колхозник-прицепщиксене тата заправщиксене — тӗштырӑсемпе пӑрҫа йышши культурӑсем акнӑ пӗтӗм ҫӗр лаптӑкӗнче тыр-пул тухӑҫлӑхне ӳстеремелли плана вӑтамран илсен ирттерсе тултарнӑшӑн (сухаланӑшӑн, сӳреленӗшӗн, культиваци тунӑшӑн, акнӑшӗн тата пухса кӗртнӗшӗн), вӑл лаптӑкра трактор бригади ӗҫленӗ пулсан, колхозри тыр-пул тухӑҫлӑхӗн планӗнчен ирттерсе илнӗ тӗштырӑн 13 процентне натурӑпа памалла. Кашни ӗҫе уйрӑмӑн туса пынӑ пулсан, ҫав уйрӑм ӗҫе тунӑ лаптӑкра тыр-пул тухӑҫлӑхӗн планӗнчен ирттерсе илнӗ тыр-пулран — сухаланӑшӑн тата сӳреленӗшӗн 6 процент, культиваци тунӑшӑн 1 процент, акнӑшӑн 2 процент тата пухса кӗртнӗшӗн 4 процент чухлӗ тӗштырӑ хушса тӳлемелле.

Пӗр культура е темиҫе культура тӑрӑх тыр-пул тухӑҫлӑхӗн планне ирттерсе тултарнӑ пулсан, трактористсем, трактор бригадисен бригадирӗсем, вӗсен помощникӗсем, колхозник-прицепщиксем тата заправщиксем — трактор бригади ӗҫлесе тӗштырӑсемпе пӑрҫа йышши культурӑсем акса хӑварнӑ пӗтӗм ҫӗр лаптӑкӗнче вӑтамран илсен тыр-пул тухӑҫлӑхӗн планне тултарнӑ пулсан ҫеҫ ҫав культурӑсемшӗн ӗҫшӗн хушса илеҫҫӗ.

ХӖВЕЛҪАВӐРНАШ ТӐРӐХ. Трактористсене, трактор бригадисен бригадирӗсене, вӗсен помощникӗсене, колхозник-прицепщиксене тата заправщиксене — хӗвелҫаврӑнӑш акнӑ пӗтӗм ҫӗр лаптӑкӗнче тухӑҫлӑх планне ирттерсе тултарнӑшӑн (сухаланӑшӑн, сӳреленӗшӗн, культиваци тунӑшӑн, акнӑшӑн, ретсем хушшинче ӗҫленӗшӗн тата пухса кӗртнӗшӗн), ҫав лаптӑкра трактор бригади ӗҫленӗ пулсан, вӑл культура тӑрӑх палӑртнӑ нормӑран ирттерсе пухса илнӗ хӗвелҫаврӑнӑшӑн 15 процентӗ чухлӗ натурӑпа тӳлеҫҫӗ. Кашни ӗҫе уйрӑммӑн туса пынӑ пулсан, ҫав уйрӑм ӗҫсене тунӑ ҫӗрте тухӑҫлӑх планӗнчен ирттерсе пухса илнӗ хӗвелҫаврӑнӑшӗнчен — сухаланӑшӑн тата сӳреленӗшӗн 6 процент, культиваци тунӑшӑн 1 процент, акнӑшӑн 2 процент, ретсем хушшинче ӗҫленӗшӗн 2 процент тата пухса кӗртнӗшӗн 4 процент чухлӗ хӗвелҫаврӑнӑш парса хушса тӳлемелле.

ЙӖТӖН, СРЕДНЕ-РУССКИ ТАТА КАНТАРТИ КАНТӐР ТӐРӐХ. Трактористсене, трактор бригадисен бригадирӗсене, вӗсен помощникӗсене, колхозник-прицепщиксене тата заправщиксене — трактор бригади ӗҫлесе акса хӑварнӑ йӗтӗнӗн, средне-русски е кӑнтӑрти кантӑрӑн пӗтӗм ҫӗр лаптӑкӗнче тухӑҫлӑх планне ирттерсе тултарнӑшӑн (сухаланӑшӑн, сӳреленӗшӗн, культиваци тунӑшӑн, акнӑшӑн тата пухса кӗртнӗшӗн) ҫав кашни уйрӑм культурӑсем тӑрӑх плана палӑртнинчен ирттерсе туса илнӗ вӑррӑн тата сӳсӗн 15 процентне натурӑпа тӳлеҫҫӗ. Кашни ӗҫе уйрӑммӑн туса пынӑ пулсан, ҫав уйрӑм ӗҫсене тунӑ ҫӗрте планран ирттерсе туса илнӗ вӑрлӑхран тата сӳсрен — сухаланӑшӑн тата сӳреленӗшӗн 6 процент, культиваци тунӑшӑн 1 проц., акнӑшӑн 2 проц., пухса кӗртнӗшӗн 6 проц. чухлӗ вӑрӑ тата сӳс памалла.

САХӐР КӐШМАНӖ ТӐРӐХ. Трактористсене, трактор бригадисен бригадирӗсене, вӗсен помощникӗсене, колхозник-прицепщиксене тата заправщиксене — трактор бригади ӗҫлесе акса хӑварнӑ сахӑр кӑшманӗн ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче планран ирттерсе туса илнӗ сахӑр кӑшманӗн кашни центнерӗшӗн (сухаланӑшӑн, сӳреленӗшӗн, культиваци тунӑшӑн, акнӑшӑн, ретсем хушшинче ӗҫленӗшӗн, пухса кӗртнӗшӗн) сахӑр кӑшманӗн кашни центнерӗ колхозра ларнӑ вӑтам хакӑн (завод тӳлекен хакӑн) 20 процентӗ чухлӗ укҫан тӳлеҫҫӗ; кашни центнерӑн вӑтам хакне палӑртнӑ чухне тӗп тӳлевсене тата сахӑр заводне планран ирттерсе кӑшман панӑшӑн колхоз илнӗ преми-надбавкӑсене те шута илмелле.

Кашни ӗҫе уйрӑммӑн туса пынӑ пулсан, ҫав уйрӑм ӗҫсене тунӑ ҫӗрте планран ирттерсе туса илнӗ сахӑр кӑшманӗн кашни центнерӗшӗн — сухаланӑшӑн тата сӳреленӗшӗн—сухаланӑшӑн тата сӳреленӗшӗн 8 процентӗ чухлӗ, культиваци тунӑшӑн 2 процент, акнӑшӑн 3 процент, ретсем хушшинче тума палӑртнӑ ӗҫсене пурне те тунӑшӑн 2 процент, пухса кӗртнӗшӗн 5 процент чухлӗ укҫан хушса тӳлемелле. Кашни центнерӑн вӑтам хакне палӑртнӑ чухне тӗп тӳлевсене тата сахӑр заводне планран ирттерсе кӑшман панӑшӑн колхоз илнӗ преми-надбавкӑсене те шута илмелле.

ҪӖРУЛМИПЕ ПАХЧА-ҪИМӖҪСЕМ ТӐРӐХ. Трактористсене, трактор бригадисен бригадирӗсене, вӗсен помощникӗсене, колхозник-прицепщиксене тата заправщиксене — трактор бригади ӗҫлесе лартса хӑварнӑ ҫӗрулмин е пахча-ҫимӗҫсен пӗтӗм ҫӗр лаптӑкӗнче тухӑҫлӑх планне ирттерсе тултарнӑшӑн (сухаланӑшӑн, сӳреленӗшӗн, культиваци тунӑшӑн, ретсем хушшинче ӗҫленӗшӗн) планран ирттерсе туса илнӗ ҫӗрулмин е пахча-ҫимӗҫсен 11 процентне натурӑпа е, трактор бригадин работникӗсем килӗшнӗ тӑрӑх, ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫсен колхоз сутакан вӑтам хакӗнчен шутласа укҫан тӳлемелле. Кашни ӗҫе уйрӑммӑн туса пынӑ пулсан, ҫав уйрӑм ӗҫсене тунӑ ҫӗрте планран ирттерсе туса илнӗ ҫӗрулмирен е пахча-ҫимӗҫсенчен — сухаланӑшӑн тата сӳреленӗшӗн 7 процент, культиваци тунӑшӑн 2 проц. тата ретсем хушшинче ӗҫленӗшӗн 2 проц. натурӑпа тӳлемелле.

ҪӖРМАМӐКӖ, ТАБАКПА МАХОРКА, ЙӖТӖН-КУДРЯШ, РЫЖИК ТАТА ҪАК ПОСТАНОВЛЕНИРЕ КӐТАРТМАН ЫТТИ ЯЛХУҪАЛӐХ КУЛЬТУРИСЕМ ТӐРӐХ, трактористсем, трактор бригадисен бригадирӗсем, вӗсен помощникӗсем, колхозник-прицепщиксем тата заправщиксем кашни ӗҫкунӗ ҫинех уйхир бригадинчи колхозник тыр-пул тухӑҫлӑхӗн планне ирттерсе тултарнӑшӑн пӗр ӗҫкунӗшӗн хушса тӳленӗ чухлӗ натурӑпа е укҫан хушса илеҫҫӗ.

2. Трактор бригади темиҫе колхозра ӗҫлет пулсан, трактор бригадин работникӗсем планран ирттерсе тыр-пул туса илнӗ кашни уйрӑм колхозра хӑйсем ӗҫлесе тунӑ ӗҫкунӗсем ҫине кӑна ӗҫшӗн хушса илеҫҫӗ, ҫакӑн чухне трактор бригади ӗҫленӗ ытти колхозсенчи тыр-пул тухӑҫлӑхне шута илмеҫҫӗ.

3. Ҫакӑн пек йӗрке тӑвас: колхоз хирӗнче ӗҫленӗ трактористсене тата колхозник-прицепщиксене ӗҫшӗн хушса тӳлес йӗркепе тӳлемелли тыр-пула е укҫа-тенке, трактор бригадин бригадирӗпе унӑн помощникне тата заправщика хушса тӳлемеллине уйӑрса илнӗ хыҫҫӑн, кашни тракторист тата колхозник-прицепщик ҫак культурӑна акнӑ ҫӗр ҫинче ӗҫлесе илнӗ ӗҫкунӗсен хисепне шута илсе валеҫеҫҫӗ.

4. Ҫакӑн пек йӗрке тӑвас: трактор бригадин бригадирӗ — ҫав бригадӑри тракторист ӗҫшӗн хушса илекен вӑтам тӳлевӗн 150 процентӗ чухлӗ, бригадир помощникӗ — тракторист ӗҫшӗн хушса вӑтамран илекен тӳлевӗн 20 процент ытларах, заправщик — тракторист ӗҫшӗн хушса илекен тӳлев чухлӗ илеҫҫӗ.

Бригадира, унӑн помощникне тата заправщика ӗҫшӗн хушса тӳлемелли хисепе палӑртас тесе, трактористсем ӗҫшӗн хушса илнӗ пӗтӗм суммӑна трактористсен йышӗ ҫине валеҫеҫҫӗ, ҫакӑн хыҫҫӑн пулнӑ вӑтам хисепрен вара бригадира, унӑн помощникне тата заправщика хушса тӳлемелли хака палӑртаҫҫӗ.

5. Тӗштырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсен, хӗвелҫаврӑнӑшӗн, йӗтӗнӗн, средне-русски тата кӑнтӑрти кантӑрӑн, сахӑр кӑшманӗн, ҫӗрулмин, ҫӗрмамӑкӗн, табакпа махоркӑн тата ытти ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне ӳстермелли плана ирттерсе тултарнӑшӑн трактористсене, трактор бригадисен бригадирӗсене, вӗсен помощникӗсене, колхозник-прицепщиксене тата заправщиксене ӗҫшӗн хушса тӳлессине ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне ӳстернӗшӗн уйхир бригадисемпе звенисенчи колхозниксене ӗҫшӗн хушса тӳленипе пӗр вӑхӑтрах, тепӗр майлӑ каласан, колхоз ялхуҫалӑх продукчӗсем парас тӗлӗшпе государство умӗнчи обязательствӑсене тултарнӑ хыҫҫӑн, вӑрлӑх, фураж, страховой тата колхозри ытти общественнӑй фондсене хывнӑ хыҫҫӑн тумалла.

6. МТС-сен директорӗсене ҫапла тума хушас: трактор бригадисене уйрӑм колхозсем ҫумне пӗр ҫулталӑкран кая мар срокпа ҫирӗплетсе хумалла, бригадӑсене, май пур таран, ҫав колхозран килнӗ трактористсене пухса йӗркелемелле. Трактор бригадисене пысӑк сӑлтавсемсӗрех пӗр колхозран тепӗр колхоза куҫарма чарас.

МТС-сен директорӗсене тата колхозсен председателӗсене ҫапла тума хушас: трактор бригадисене ялан ӗҫлекен колхозник-прицепщиксем парса йӗркелемелле, ҫав колхозник-прицепщиксем бригадӑра уйхирти ялхуҫалӑх ӗҫӗсен пӗтӗм тапхӑрӗ тӑршшӗпех ӗҫлемелле.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Майӑн 10-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Майӑн 10-мӗшӗнче фронтра нимӗнле паллӑ улшӑнусемех те пулман.

Майӑн 9-мӗшӗнче нимӗҫсен 25 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 18 самолет пӗтнӗ.

* * *

Майӑн 9-мӗшӗнче пирӗн авиацин чӑсӗсем нимӗҫсен 13 танкне, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан утмӑла яхӑн автомашинине, боеприпассем тиенӗ 5 лавне, 14 полевой тата зенитнӑй орудине, пӗр прожекторне пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, пӗр чупуҫул составне ҫӗмӗрнӗ, противникӑн пехотине пӗр батальона ҫитиех саппаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Ленинград фрончӗн уйрӑм участокӗсенче кӗрешекен пирӗн чӑсем икӗ кун хушшинчи ҫапӑҫусенче противникӑн темиҫе орудине, миномечӗсене, пулемечӗсене тата салтакӗсемпе офицерӗсене 500 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Кӗҫӗн лейтенант Муратиков командир пулса ертсе пыракан пирӗн боецсем (Хӗвеланӑҫ фрончӗ), противникӑн тылӗнче кӗрешнӗ чухне, нимӗҫсен 2 ҫар эшелонне сирпӗнтерсе янӑ. Пӗр паровоз тата 30 вагон ытла ҫӗмӗрӗлнӗ. Ҫав крушение пула противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсем, вилнисене шутласан кӑна, 1000 ҫын ытла пӗтнӗ.

* * *

Пирӗн 11 самолет, Зуб юлташ командир пулса ертсе пынипе (Кӑнтӑр фрончӗ), ҫак кунсенче противникӑн аэродромне атакӑланӑ. Аэродром ҫинче хӗрӗхе ҫити самолет ларнӑ. Аэродрома тӑшманӑн 4 истребителӗ хураллаcа тӑнӑ. Пирӗн истребительсем, тӑшманӑн истребителӗсене хирӗҫ ҫапӑҫма тытӑнса, вӗсене аэродромран аяккалла илсе кайнӑ. Ҫав вӑхӑтра пирӗн штурмовиксем, аялтан вӗҫсе пырса, нимӗҫсен ҫӗр ҫинче ларакан самолечӗсене атакӑланӑ. Противникӑн 12 самолетне ҫунтарса янӑ, 9 машинине сиенленӗ.

* * *

Карпов юлташ командир пулса ертсе пыракан пирӗн подразделени (Калинин фрончӗ) нимӗҫсен пехотин 6 танк пулӑшнипе тунӑ виҫӗ контратакине сирсе пӑрахнӑ. 150 гитлеровеца ытла пӗтерсе тӑкнӑ, нимӗҫсен пӗр танкне ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Богданов юлташӑн оруди расчечӗ тӳррӗн тӗллесе персе нимӗҫсен 3 танкне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нимӗҫсен 88-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 188-мӗш саперӑй батальонӗнчи 1-мӗш ротӑран тыткӑна лекнӗ салтак Франц Иле ҫапла каласа панӑ: «Салтаксем нумайӗшӗ офицерсем ҫине тӑшманла пӑхаҫҫӗ. Салтаксем уйрӑмах ҫар врачӗсене кураймаҫҫӗ. Мӗншӗн тесен врачсем кашни салтака симулянт тесе шутлаҫҫӗ тата вӗсем инвалидсемпе сурма чӑлахсене куратӑркачах строевой службӑна юрӑхлӑ тесе кӑтартса параҫҫӗ. Январь уйӑхӗнче Киевра партизансем пысӑк ҫурта сирпӗнтерсе янӑ, унта нимӗҫ штабӗсен учрежденийӗсем вырнаҫнӑ пулнӑ. Ҫавӑнта нумай офицерсем, вӑл шутрах темиҫе полковник та, пӗтнӗ. Саперӑй батальонри салтаксем ҫавӑн ҫинчен Киева пынӑ чухне поезд ҫинче пӗлчӗҫ. Взрыв пулни ҫинчен каласа панине илтсен, нумайӗшӗсем кулса ячӗҫ, хӑшпӗрисем тата шӳт тума та пӑхрӗҫ. Тахӑшӗ, хамӑрӑн ҫынсем пӗтнинчен кулма кирлӗ мар тесе, салтаксене чарма хӑтланчӗ. Вара пӗр салтак: «Анчах вӗсем офицерсем пулнӑ вӗт-ха!» терӗ.

* * *

Нимӗҫсен вилнӗ обер-эфрейторӗ Хойнек ҫумӗнче вӑл хӑйӗн тӑван ҫӗршывне яма ӗлкӗреймен ҫырӑва тупнӑ. Унта вӑл ҫапла ҫырнӑ: «Вӑрманта атакӑсем тунӑ чухне мӗн пулса иртнине эсӗ тавҫӑрса илме те пултараймӑн. Эрне хушшинче пирӗн ротӑна пӗтерсе тӑкрӗҫ, 10 ҫын кӑна чӗррӗн тӑрса юлчӗ. Манӑн юлташсенчен пӗри те юлмарӗ. Пурте е вилнӗ, е аманнӑ. Халӗ, ак, хӗвел хӗртсе пӑхать, тулта юр ирӗлет. Пӗтӗмпех шывпа витӗнчӗ. Эпир шурлӑх варринче ларатпӑр, малалла мӗн пулассине кӗтетпӗр, мӗншӗн тесен ҫакӑн пек ушкӑнпа малалла ҫапӑҫма ҫук. Пӗттӗрччӗ часрах ку иккек-синкек, ҫакӑнтан хӑтӑлса тухса каясчӗ кӑна».

* * *

Ленинград облаҫӗнчи Грузино ялӗнче гитлеровецсем тискеррӗн асаплантарса вӗлернӗ 7 красноармеецӑн виллине тупнӑ. Вырӑнта пурӑнакан ҫынсем ҫапла каласа параҫҫӗ: тыткӑна лекнӗ аманнӑ красноармеецсене нимӗҫсем карта ҫумне ҫыхса лартнӑ та тискеррӗн асаплантарнӑ, унтан вара штыксемпе чике-чике пӑрахнӑ.

Майӑн 11-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Майӑн 11-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле фронтра нимӗнле паллӑ ӗҫсемех те пулса иртмен.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи участоксенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн чӑсем нимӗҫсен 5 орудине, 13 пулеметне, темиҫе минометне тата танка хирӗҫ пемелли пӑшалӗсене, винтовкӑсем, противотанковӑй минӑсем, снарядсем тата патронсем нумай тытса илнӗ. Фронтӑн тепӗр участокӗнче пирӗн артиллери нимӗҫсен 2 танкне персе ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Сурҫӗр енче пирӗн пӗр часть противникӑн ҫирӗплетнӗ пунктне атакӑланӑ. Тӑшмана ҫавӑрса илсе, пирӗн боецсем салтаксемпе офицерсене 200 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Противник салтакӗсен чылай пысӑк ушкӑнӗ тыткӑна парӑннӑ. Ҫапӑҫура 3 миномет, 10 пулемет, 160 винтовка, 1000 граната, патронсем, противогазсем тата ытти ҫар пурлӑхӗсем нумай тытса илнӗ.

* * *

Калинин фронтӗнчи участоксенчен пӗринче противник пирӗн войскӑсен тылне кӗрсе кайма хӑтланса пӑхнӑ. Совет пехотипе артиллерийӗ, хирӗҫ пырса ҫапса, нимӗҫсене каялла сирсе пӑрахнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсем 400 ҫын ытла вилсе юлнӑ. Пирӗн боецсем 4 оруди, 4 радиостанци, 7 пулемет тата ытти хӗҫпӑшалсем тытса илнӗ.

* * *

Нимӗҫсен темиҫе самолечӗ пирӗн пӗр часть вырнаҫса тӑнӑ вырӑна бомбӑсем пӑрахма хӑтланнӑ. Старши сержантӑн Чепченко юлташӑн зенитнӑй орудийӗн расчечӗ пеме тытӑннӑ. Темиҫе хут пенӗ хыҫҫӑн «Хейнкел — 111» самолет ҫунма тытӑнса ҫӗрелле персе аннӑ. Тепӗр кунне зенитчиксем нимӗҫсен «Юнкерс-87» йышши татах 2 бомбардировщикне персе ӳкернӗ.

* * *

Противник оборонин малти линине сӑнаса тӑнӑ чухне кӗҫӗн сержант Козырев нимӗҫ салтакӗсен пӗр блиндаж патӗнче пухӑнса тӑнӑ ушкӑнне асӑрханӑ. Козырев юлташ пулеметран темиҫе черетпе персе 10 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нимӗҫсен 168-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 422-мӗш полкӑн 5-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ салтак Герхард Каснер ҫапла каласа панӑ: «Пӗр ҫапӑҫура кӑна 5-мӗш ротӑра 52 ҫын вилсе тата аманса пӗтрӗ, 7-мӗш ротӑна вара пӗтӗмӗшпе пекех пӗтерсе тӑкнӑ. Мартпа апрель уйӑхӗсенче полка ҫар завочӗсенчен мобилизациленӗ рабочисем килчӗҫ. Вӗсене ҫар ӗҫне пачах та вӗрентмен. Ротӑсенче вӑйлӑ чирленисем нумай, анчах вӗсене эмеллемеҫҫӗ тата киле те ямаҫҫӗ. 5-мӗш ротӑри салтак Ванске ревматизмпа чирлет. Начар ҫанталӑк тӑнӑ чухне вӑл утма пултараймасть, упаленсе ҫӳрет. Пӗр комисси вӑл чирлине ҫирӗплетсе парса ӑна ҫартан ямалла турӗ. Ванске киле кайма хатӗрленнӗччӗ, анчах ҫакӑн хыҫҫӑн пулнӑ комисси малтанхи комиссин решенине пӑрахӑҫа кӑларчӗ. Ӑна стройрах хӑварчӗҫ, мӗншӗн тесен ҫынсем ҫитмеҫҫӗ».

* * *

Рабочисене пӗрмаях фронта яма мобилизациленӗ пирки Германири предприятисенче ӗҫ вӑйӗ питех те нумай ҫитми пулнӑ. Гитлеровецсем, пур майсемпе те тӑрӑшса, оккупациленӗ ҫӗршывсенчен ӗҫ вӑйӗ илме хӑтланаҫҫӗ. Анчах та рабочисем нихӑшӗ те хӑйсен ирӗкӗпе каймаҫҫӗ. Ҫак кунсенче, ирӗксӗрлесех Германие янине хирӗҫ протестлесе, Амстердамри суднӑсем тӑвакан заводри тата Голландири ытти нумай предприятисенчи рабочисем забастовкӑсем туса ирттернӗ.

Хӗрлӗ Ҫарӑн начальствующи тата рядовой составне наградӑлани

Ленинград хулине тата Ленинград фронтне снабжени парса тӑрас тӗлӗшпе Правительствӑн заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн СССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ тӑрӑх Хӗрлӗ Ҫарӑн начальствующи тата рядовой составӗн группине орденсемпе тата медальсемпе наградӑланӑ:

ЛЕНИН орденӗпе — интендантски службӑн генерал-майорне Ф. Н. Лагунова, интендантски службӑн генерал-майорне А. М. Шилова, бригаднӑй комиссара И. В. Шикина наградӑланӑ.

ХӖРЛӖ ЯЛАВ орденӗпе — 12 ҫынна;

ХӖРЛӖ ҪӐЛТАР орденӗпе — 114 ҫынна;

«ЗА ОТВАГУ» медальпе — 62 ҫынна;

«ЗА БОЕВЫЕ ЗАСЛУГИ» медальпе — 150 ҫынна наградӑланӑ. (ТАСС).

Ҫуракине ирттерес тӗлӗшпе пысӑк тухӑҫлӑхпа тата лайӑх пахалӑхпа ӗҫленӗшӗн, ВКП(б) райкомӗсемпе ӗҫҫынни депутачӗсен районсенчи Совечӗсен исполкомӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми ҫине ҫаксене кӗртнӗ:

6. **Константин Леонтьевич Самылкин** — Хӗрлӗ Чутай МТС-ӗнчи тракторист. Самылкин юлташ акан малтанхи кунӗсенчех ӗҫӗн пысӑк тухӑҫлӑхне кӑтартса пынӑ. Юр кайса пӗтсенех кушӑрханӑ вырӑнсене суйласа сухаланӑ чухне вӑл, каҫхи сменӑра СХТЗ—НАТИ тракторпа ӗҫлесе, малтанхи кунах нормӑра кӑтартнӑ 7,2 гектар вырӑнне 7,3 гектар сухаланӑ, иккӗмӗш кунӗнче — 8,14 гектар, виҫҫӗмӗшӗнче — 10,8 гектар сухаланӑ. Ҫав ҫӗрле Самылкин юлташ 32 килограмм горючи перекетленӗ. Самылкин юлташ ытти трактористсене яланах пулӑшса пырать. Ҫавӑн пек вӑл Чумакова трактористкӑна пулӑшать. Чумакова та задание 100 процент тултарса ӗҫлет.

7. **Хӗрлӗ Чутай МТС-ӗнчи трактористсен Ф. Т. Афондеркина ертсе пыракан бригади.** Афондеркина юлташӑн бригади акан малтанхи кунӗсенчех паха тӗслӗхсем кӑтартнӑ. Бригадӑри тракторсем пурте тӑттӑн-сыппӑнсӑр ӗҫлеҫҫӗ, вӗсен пӗр простой та пулман. Бригада пӗчӗк вӑхӑт хушшинчех, юр кайса пӗтнӗ-пӗтменех, кушӑрханӑ вырӑнсене суйласа илсе, 200 гектар сухаланӑ. 48 килограмм горючи перекетленӗ.

8. **Вера Маркелова** — Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозӑн суха тӑваканӗ. Юр кайса пӗтнӗ хыҫҫӑнах кушӑрханӑ вырӑнсене суйласа сухаланӑ чухне вӑл кулленех, нормӑра кӑтартса панӑ 1 гектар вырӑнне, 1,5 гектар сухаланӑ. Маркелова юлташ тепӗр сухаҫӑпа — П. Кузьминапа ӑмӑртса ӗҫлет.

9. **Иван Архиповпа Трофим Матюшкин** — Хӗрлӗ Чутай районӗнчи «Самолет» колхозри тырӑ акакансем. Акана тухичченех вӗсем хӑйсемех сеялкӑсене юсаса лартнӑ, плугсене, инвентаре, лаша кӳлме кирлӗ япаласене пурне те типтерлӗ хатӗрлесе хунӑ. Архиповпа Матюшкин юлташсем 13 ретлӗ сеялкӑпа 4 кун хушшинче пӗтӗмпе 52 гектар акнӑ.

10. **Хӗрлӗ Чутай районӗнчи «Пятилетка» колхозӑн И. В. Важаров ертсе пыракан уйхир бригади.** Ҫав бригада, юр кайса пӗтнӗ-пӗтменех, кушӑрханӑ вырӑнсене суйласа илсе, апрелӗн 28-мӗш числинчех сухалама тытӑннӑ. Сухаласа пӑрахнӑ ҫӗре типсе выртма памасӑр, бригада ҫавӑнтах акса пынӑ. Тӗштырӑсене вӑл 6 ӗҫ кунӗ хушшинче акса пӗтернӗ. Акмалли ҫӗр лаптӑкӗн 90 процентне ҫав бригада сеялкӑпа акнӑ.

11. **Красноармейски районри «Красная Чувашия» колхоз** (колхоз председателӗ **Дмитриев** юлташ). Колхоз тӗштырӑ культурисене 7 ӗҫ кунӗнче акса пӗтернӗ. Колхоз оборона фондне хывма планран ирттерсе 1 гектар тӗштырӑ культурисем акнӑ. Суракинче А. Иванова, А. Алексеева тата В. Артемьева колхозницӑсем фронтри пек ӗҫленӗ, вӗсем кулленех, планра кӑтартнӑ 1,25 гектар вырӑнне, 1,40—1,60 гектар тултарса пынӑ. Тырӑ акакан П. Гурьев, 11 ретлӗ сеялкӑпа ӗҫлесе, кашни сменӑрах 6—7-шер гектар акса пынӑ.

Хатӗрлев работникӗсен канашлӑвӗсем

Майӑн 10-мӗшӗнче Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗ Сомов юлташ хатӗрлев организацийӗсен республикӑри тата районсенчи руководителӗсен канашлӑвне ирттерчӗ.

Канашлура Наркомзагӑн районсенчи уполномоченнӑйӗсем, «Заготскот», «Маслопром», «Заготживсырье», «Заготпенькопром» тата Чӑвашпотребсоюз представителӗсем пулчӗҫ.

Канашлу, аш-какай, сӗт-ҫу, ҫӑмарта техникӑллӑ культурӑсем, тирсем тата ытти ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлес ӗҫ 1942 ҫулти пӗрремӗш тата иккӗмӗш кварталсенче мӗнле пыни тата ҫӑм пухма хатӗрленесси ҫинчен сӳтсе-яврӗ.

Ку ыйту тӑрӑх Наркомзаг уполномоченнӑйӗсен — Желтухин (Куславкка), Виноградов (Ҫӗрпӳ), Егоров (Красноармейски) юлташсен доклачӗсене, унтан «Заготпенькопромӑн» Ҫӗрпӳри конторин ӗҫӗсем ҫинчен Ефимов юлташӑн, Элӗкри сӗс завочӗн директорӗн Шепелев юлташӑн, Ҫӗрпӳри райсоюзӑн хатӗрлев конторин ӗҫӗсем ҫинчен Сафонов юлташӑн тата «Маслопромӑн» Сӗнтӗрвӑрринчи завочӗн директорӗн Губанов юлташӑн доклачӗсене итлерӗ.

Докладсем тӑрӑх пренире Мальцев («Заготпенькопром»), Никодистов («Заготживсырье»), Ерин («Маслопром») Балк («Заготживсырье»), Николаев (Чӑвашпотребсоюз), Митьков юлташсем (Уполнаркомзаг) тухса каларӗҫ.

Канашлу уйрӑм районсенче ялхуҫалӑх продукчӗсене хатӗрлес ӗҫ организованно пулса пыманнине палӑртрӗ. Сӑмахран, Куславкка, Красноармейски, Ҫӗрпӳ районӗсем плана питех те сахал тултарнӑ. Ытти продуктсене хатӗрлессипе те ӗҫ ҫителӗксӗр пулса пырать.

Ялхуҫалӑх продукчӗсене хатӗрлес ӗҫ кая юлса пыни хатӗрлев организацийӗсен ҫаврӑнӑҫусӑрлӑхӗнчен, вӗсен агенчӗсем ҫителӗксӗр ӗҫленинчен, партипе совет организацийӗсем вӗсен ӗҫне тӗрӗслесе тӑманнинчен килет. Ялхуҫалӑх продукчӗсене йышӑнма «Маслопромӑн» вырӑнти предприятийӗсем начар хатӗрленнӗ.

Юлашкинчен Чӑваш АССР Совнаркомӗн председателӗ Сомов юлташ тухса каларӗ. Вӑл хӑйӗн сӑмахӗнче ялхуҫалӑх продукчӗсене хатӗрлес плана пӗтӗмпех тултарса пыма кирли ҫинчен чарӑнса тӑчӗ, заготовка организацийӗсен руководителӗсемпе работникӗсем халӗ те ҫаплах ҫителӗксӗр ӗҫленине палӑртрӗ. Вӗсем хӑйсен ӗҫне партипе советӑн, комсомолпа колхозсен активӗпчен уйӑрӑлса туса пынине, ҫав вӑхӑтрах вырӑнти актив ялхуҫалӑх продукчӗсене хатӗрлес тӗлӗшпе хатӗрлев организацийӗсене пысӑк пулӑшу пама пултарнине кӑтартса пачӗ.

Сомов юлташ хатӗрлев организацийӗсен руководителӗсене хӑйсен ӗҫне пӗтӗмпех вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек урӑхлатса ҫӗнетме чӗнчӗ.

* * *

Хатӗрлев организацийӗсен руководителӗсен канашлӑвӗ ҫавӑн пекех Канаш хулинче те пулса иртнӗ. Унта 17 район представителӗсем пулнӑ. 9 районран пынӑ представительсем доклаԁсем туса панӑ. Канашлура ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн секретарӗ Пивоваров юлташ пулнӑ.

Заем кампанийӗнчи активистсем

Государствӑн 1942 ҫулти Военнӑй Заемне Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисем, Совет Союзӗнчи мӗнпур ӗҫҫыннисем пекех, пысӑк хавхаланупа кӗтсе илсе сарчӗҫ. Чылай колхозсенче заем сарас ӗҫе апрелӗн 13-мӗшӗнчех вӗҫлесе, подписка укҫине пухма тытӑнчӗҫ. Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем заема 78 пин тенкӗлӗх ҫырӑнса, укҫине ҫав кунах районри перекет кассине куҫарнӑ. Советски районри Чуманкасси ялсоветӗнче ӗҫлеме пултараканcене пурне те заем ҫырӑнас ӗҫе малтанхи кунах явӑҫтарнӑ. Кунта заема пурӗ 93 пин тенкӗлӗх сарса, укҫине ҫийӗнчех пухса ҫитернӗ. Подписка укҫине пухас тӗлӗшпе заем уполномоченнӑйӗ Мартынов юлташ тӑрӑшса ӗҫленӗ. Вӑл малтанхи кунах 16.300 тенкӗ пухса панӑ. Ҫавӑн пекех Шарпаш ялӗнчи уполномоченнӑй Е. Волкова юлташ, Доронин ячӗпе тӑракан колхозри уполномоченнӑй — фронтран аманса таврӑннӑ Архипов юлташ та подписка укҫине ҫийӗнчех пухса ҫитернӗ.

Республикӑра заем сарас ӗҫ кӑҫал ытти хӑҫанхинчен ӑнӑҫлӑн иртрӗ. Ҫакӑ вӑл пирӗн ӗҫҫыннисем тӑван ҫӗршыва чӗререн юратнинчен, фронта пур енӗпе те пулӑшассишӗн тӑрӑшнинчен килчӗ. Ҫакӑнпа пӗрлех заема вырнаҫтарас ӗҫре ялти активистсен примерӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑчӗ. Сӑмахран, Чкаловски районри «Красный Октябрь» колхоз председателӗ Булатов юлташ, заема 3.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса, укҫине те ҫавӑнтах тӳленӗ. Унӑн примерне кура подписка укҫине ыттисем те ҫийӗнчех тӳлеме тытӑннӑ. Ҫапла майпа колхозра заем укҫине пӗр-икӗ кун хушшинчех пухса ҫитернӗ. Ҫакӑн пек лайӑх примерсемех ку районри «Трудовик» колхоз председателӗ И. Мартынов, «Большевик» колхоз председателӗ Егоров юлташсем те кӑтартнӑ. Вӗсем ҫӗнӗ заема 1.500-шер тенкӗлӗх ҫырӑнса, укҫине ҫийӗнчех парса татнӑ. Заем кампанийӗнчи ҫакӑн пек активистсене питех те нумай илсе кӑтартма пулать.

Г. ПЛАТОНОВ.

АКА ĔÇНЕ ПЫСĂК ПАХАЛĂХПА ТУСА ИРТТЕРЕР!

Ăмăрту хĕрӳллĕн пырать

Ишлей МТС-ĕн тракторĕсем çуракине кайас умĕн трактористсемпе трактористкăсен кĕске митингĕ пулса иртрĕ. Тракторсене ремонтланă çĕрте хĕрӳллĕн ăмăртса ĕçленĕ трактористсем, умра тăракан задачăсене сӳтсе явса, социализмлă ăмăртăвăн хĕллехи вăхăтри итогне пăхса тухрĕç. Тракторсене юсас ĕçре малта пынă 9-мĕш бригада МТС-ĕн куçса çӳрекен хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ, стахановла ĕçлекен 14 трактористпа трактористсем хушшинче куçса çӳрекен пĕчĕк флажоксем пачĕç.

Хĕрлĕ ялава алла илсе, 9-мĕш бригадăн бригадирĕ Ефимов юлташ митингра: ялхуçалăх çулĕ вĕçлениччченех стахановла ĕçлесе çак Хĕрлĕ ялава алăран ямăпăр, терĕ. Тракторсен кашни бригади, кашни тракторист тата трактористка çуракинче кăтартуллăн ĕçлеме пулса, социализмлă ăмăртăва малалла тăсса, конкретлă обязательствăсем илчĕç.

Халĕ уйрăм трактористсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ирттерсе пурнăçлаççĕ. Трактористка Мария Толстова У—2 тракторпа сменăра 5 гектар сухалать, план тăрăх 2,5 гектар сухаламалла. Тракторист Иванов та сменăра 4—5 гектар сухалать.

Трактор çине кăçал çеç ларнă çамрăк трактористка Клавдия Ефимова çуракин малтанхи кунĕнчех сменăри нормăна 150 процент тултарчĕ. «СТЗ» тракторпа сменăра 4 гектар сухаламалла пулсан, вăл 5—6 гектар сухалать. 9-мĕш бригадăри тракторист М. Родионова талăкра 6,5 гектар сухалать.

Трактористсемпе трактористкăсем социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене кашни кун тĕрĕслесе тăраççĕ. Кашни бригада пысăк тухăçлăн ĕçлеме тăрăшать. Ефимов юлташ ертсе пыракан хĕрлĕ ялавлă 9-мĕш бригада çуракинче те паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет. Бригада кулленхи ĕç нормине 120—130 процент тултарса ĕçлет. Çураки пуçланнăранпа çак вăхăт хушшинче вăл 24 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Пултаруллă организатор, хăйĕн пĕтĕм вăйне ĕçе пама тăрăшакан Ефимов юлташ майăн 5-мĕшĕнче парти членĕн кандидатне кĕчĕ.

Анчах пирĕн çитменлĕхсем те пур-ха, вĕсене вăхăтра курса хăварт сирме тăрăшатпăр. Çуракинче уйрăмах 4-мĕш бригада начар ĕçлени курăнать. Тракторсен бригадин бригадирĕ Яковлев юлташ ĕç çине çителĕксĕр пăхнипе, лайăх юсаса кăларнă тракторсенех ĕçе хăварт кĕртеймерĕ. Трактористсем хушшинче дисциплина çирĕп пулманнипе, çуракин малтанхи кунĕсенче бригада йĕркеллĕн ĕçлеймерĕ. Çавăн пекех 6-мĕш бригадăра та çуракине тухсан тракторсем çумĕнче пĕчĕк кăлтăксем пулни палăрчĕ. Анчах вĕсене МТС механикĕсем вырăна тухса хăварт юсарĕç. 6-мĕш бригада çумне уйрăм механик çирĕплетрĕмĕр. Çакăн хыççăн ĕçĕн тухăçлăхĕ хăпарма пуçларĕ, тракторсем чарăнусăр ĕçлеме тытăнчĕç.

Социализмлă ăмăрту кунран-кун вăйланса пырать.

А. СТЕПАНОВ.
МТС политотделĕн начальникĕ.

Пĕрчĕллĕ культурăсене акса пĕтереççĕ

ШАХАСАН, майăн 9-мĕш. (Телефонпа). Енĕшри М. Горький ячĕпе тăракан колхоз паян пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтерет. Тĕпттырăсене пурĕ 200 гектар акнă.

Çуракин малтанхи кунĕсенчех колхозниксем ĕçе пысăк хастарлăхпа тума тытăнчĕç. Уйрăмăнах 4-мĕш бригада (бригадирĕ комсомолец И. Павлов) лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет. Пĕрчĕллĕ культурăсем акмалли плана бригада 5 кун хушшинче вĕçлерĕ. А. Анисимов, Н. Федоров, С. Васильев сухаçăсем кулленхи нормăна 175 процент тултарса пыраççĕ. Акакансем те стахановла хăвăртлăхпа ĕçлеççĕ. Сӳрелекенсем: Д. Павлов тата Х. Никифорова колхозниксем талăкри нормăна икĕ хут ытларах тултарса пыраççĕ.

С. ШАДИН.

ПĔР-ПĔРНЕ ПУЛĂШАÇÇĔ

КАНАШ, майăн 11-мĕш. (Телефонпа). Катек ялсоветĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз çурхи тырăсене паянхи кун тĕлне 188 гектар акнă. Колхозăн 1-мĕш, 3-мĕш, 7-мĕш бригадисем çуртыррисем акас ĕçе пысăк пахалăхпа вĕçлерĕç. Халĕ çуракине хăвăрт вĕçлес тĕллевпе акара ытти бригадăсене пулăшаççĕ.

Нумай колхозниксем акара стахановла ĕçлеççĕ. Сухаçăсем: Сергеев кулленхи нормăна — 145 процент, Порфирьев—150—160 процент тултарса ĕçлеççĕ. Колхозник Алексеев кунне виçшер гектар тырă акать.

Колхозри агитколлектив çак кунсенче хăйĕн ĕçне вăйлатрĕ. Агитаторсем —колхозниксем ĕçленĕ çĕрте, уйра Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнче панă приказа кашни колхозника вуласа панă. Яковлев, Шалкин агитаторсем кулленех колхозниксене хаçатсем вуласа параççĕ, партипе правительствăн постановленийĕсене ăнлантараççĕ. **П. С.**

Çураки

Тарăн юр айĕнчен тухакан тулăх çĕр
Тутă вăрлăх ыйтать кĕвĕçсе.
Аслă çĕр ырă вăрлăхпала пĕтĕçтĕр,
Пире кӳтĕр паха çимĕçсем.
Яри уçăлнă уй хашкинчен хирелле
Трактор тухрĕ. Ак ун умĕнчен
Çĕрлехи пĕлĕк пек шур тĕтре сирĕлет,
Çĕнĕлле çуралать çут тĕнче.
Çак палланă машина çинче çулсерен
Тухаканччĕ ларса каччă-тус.
Анчах халь саламлатăп эп çамрăк хĕре:
Пике-хĕрĕм, пуçна эс ан ус.
Паттăр пĕвĕт, пĕлетĕп, халь урăх çĕрте,
Вут-хăварлă вĕри акара.
Халь вăл çулăм акать, тăшмана вăл хĕртет,
Унăн ĕçĕ унта пахарах.
Çавăнпа та, хире тракторпа тухнă хĕр,
Сан ĕçӳ те пултăр хĕрӳ.
Вăрлăхпа та юнпа акăвăн аслă çĕр
Çитĕнтертĕр часрах çĕнтерӳ.

А. ЭСХЕЛЬ.

Металл, кăмрăк, самолетсем, моторсем ытларах парар

(Металлургипе авиаци промышленноçĕсенче малта пыракансен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕ)

Авиаци промышленноçĕпе хура металлургире малта пыракансем планран ирттерсе ытларах металл шăратма, самолетсемпе моторсем туса кăларма тата кăмрăк кăларма чĕнсе каланине çĕршывра хапăл туса йышăнчĕç. Вуншар цехсем, заводсем, комбинатсем продукци туса кăларас тĕлĕшпе государство панă плана ирттерсе тултарма хăйсем çине обязательство илеççĕ.

Аялараххра эпир Пĕтĕм Союзри ăмăртăва хутшăннă металлургипе авиаци промышленноçĕнче малта пыракансен обязательствисене пичетлетпĕр.

МАГНИТКАРИ МЕТАЛЛУРГСЕН ОБЯЗАТЕЛЬСТВИ

Магнитогорскри Сталин ячĕпе тăракан металлурги комбинатĕнчи рабочисем, инженерно-технически работниксем тата служащисем пурте пĕр шухăшлă пулса хăйсен сменăсенчи пухăвĕсенче çакăн пек резолюци йышăннă: «Металлургсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвне хутшăнса, 1942 çулта, ылханлă тăшмана—фашизма татăклăн çапса аркатмалли çулта, Магнитогорскри комбинат государство панă заданисене уйăхсерен тултарса пырĕ, тесе тăван çĕршывпа аслă Сталин умĕнче тупа тăватпăр эпир. Хĕçпăшалсемпе боеприпассем туса кăларма май уйăхĕнче программăран ирттерсе эпир çаксене пама пулатпăр:

20 пин тонна тимĕр руди,
2 пин тонна кокс,
10 пин тонна чугун,
8 пин тонна хурçă,
5 пин тонна прокат.

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар çĕршер пин çĕнĕ орудисем, танксем, самолетсем, минометсем тата боеприпассем илĕ. Урса кайнă фашистла варварсен пуçĕсем çине тăкăнĕç вĕсем.

Нимĕç оккупанчĕсене—вилĕм!

Сталин ячĕпе çĕнтерӳ патне малалла!»

ÇĔНĔ НОРМĂСЕНЕ КАШНИ РАБОЧИ ИРТТЕРСЕ ТУЛТАРТĂР

Ленин орденĕ илнĕ, Фрунзе ячĕпе тăракан, моторсем тăвакан заводри рабочисем, инженерно-технически работниксем тата служащисем, ăмăртăва хутшăнса, çаксене тума пулнă:

Моторсем туса кăлармалли плана май уйăхĕнче ирттерсе тултармалла;

Иккĕмĕш кварталта кашни рабочи çĕнĕ нормăсене ирттерсе тултартăр;

Май уйăхĕнче производствăллă цикла моторсем енĕпе 15 процент чухлĕ чакармалла;

Япаласем туса кăлармалли материалсене апрель уйăхĕнче расходланинчен 10 процент сахалтарах расходламалла.

ПУР ОБОРОНАЛЛА ЗАКАЗСЕНЕ ТЕ ПĔТĔМПЕХ ТУЛТАРАР

Серовскри металлургсем май уйăхĕнчи программăна чугун енĕпе 105 процент, хурçă енĕпе 103 процент, прокат енĕпе 104 процент тултарма, çунтармаллисем расходлассине: домна цехĕнче 3 процент чухлĕ, мартен цехĕнче 2 процент чухлĕ, шултра сортлă цехра 3 процент чухлĕ чакарма тата прокат цехĕнче металл расходлассине 2 процент чухлĕ чакарма пулса хăйсем çине обязательство илнĕ.

Завод коллективĕ авиаци, танк тата боеприпассен промышленноçĕсен пур заказĕсене те срокчен тултарма пулнă.

МЕТАЛЛУРГСЕНЕ КОКС ÇИТЕЛĔКЛĔХ ПАРСА ТĂРАР

Нижний Тагилри коксла хими заводĕ май уйăхĕнче кокс хĕртмелли плана 105 процент тултарма, потребительсене кокс газĕ çителĕклĕ таран парса тăма тата ĕç тухăçлăхне 10 процент таран ӳстерме пулать.

Косогорскри Дзержинский ячĕпе тăракан металлурги завочĕн коллективĕ май уйăхĕнче чугун шăратмалли плана 29 кун хушшинче тултарма тата коксла кăмрăк расходне чакарма пулса обязательство илнĕ.

Косогорскри завод коллективĕ ĕç тухăçлăхне 10 процент чухлĕ ӳстерме тата пур рабочисем те ĕç нормисене тултарса пыма пулнă.

Металлургсен чĕнĕвĕ çине ответлесе

КАНАШ, майăн 10-мĕш. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводра халĕ питех те пысăк производствăллă çĕкленӳ палăрать. Рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем, Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн приказĕпе хавхаланса, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, çĕршывпа фронта продукци ытларах парассишĕн кĕрешеççĕ. Инструментальнăй цехри термистсем, Смирновпа Моряков юлташсем, майăн малтанхи кунĕсенче 11-шер норма тултарчĕç. Фрезеровщик-медаленосец, ВКП(б) членĕ Осипов юлташ та тăтăшах вуншар норма тултарать. Çакăн пек тухăçлă ĕçлекенсенчен ытти рабочисем те пример илеççĕ. Ремонтно-механически цехри станочник Пименов, токарьсем Кругликов, Григорьев юлташсем çак кунсенче 7-шер норма тултарма пуçларĕç.

Металлургипе авиаци промышленноçĕнче малта пыракансем çĕршывпа фронта металл, кăмрăк, самолетсем, моторсем ытларах парассишĕн ăмăрту пуçарса ячĕç. Тата çак ăмăртăва ытти предприятисене те хутшăнма чĕнчĕç. Вĕсен чĕнĕвне вагонсем юсакан заводри рабочисем радио тăрăх илтерĕç.

— Кузнецкри металлургсен чĕнĕвĕ пире те тивет. Металлургсем çĕршывпа фронта чугун, хурçă, кăмрăк, кокс, прокат ытларах парассишĕн кĕрешеççĕ пулсан, эпир вагонсем тата ытти продуктсем парассишĕн кĕрешер, — теççĕ рабочисем.

Çак кунсенче чылай бригадăсемпе стахановецсем металлургсен чĕнĕвĕ çине ĕçпе ответлерĕç. Вагонсем юсакан цехри Марченко, Ткаченко, Михайлов, Чернухин юлташсен бригадисем хăйсене панă заданисене майăн 8—9-мĕш кунĕсенче ытлашшипех тултарчĕç. Ку бригадăсенчи рабочисем пурте нормăпа пăхнинчен икĕ хут тухăçларах ĕçлеме сăмах панă. Хальхи вăхăтра вĕсенчен чылайĕшĕсем хăйсен нормисене 2—2,5 хут ирттерсе тултараççĕ.

П. СЕРГЕЕВ.

МЕЛЬНИК—ДВУХСОТНИК

СĔНТĔР. (Хамăр корр.). Çĕньял Хуракассинчи «Пионер» колхозăн çиларманĕнче мельник пулса Васильев Иван ĕçлет. Вăл ватă ĕнтĕ, çитмĕл çула çывхарать. Апла пулин те вăл хăйĕн ĕçне тĕплĕн тăвать. Колхозниксен тыррисене вăхăтра тата лайăх авăртса парать. Çавăншăн ăна таврари çынсем хисеплеççĕ. Ĕçчен старик колхоза та пысăк тупăш кӳрет. Иртнĕ çулти кĕркунне вăл колхоза шайкка укçи 2.200 тенкĕ парас вырăнне, 3.245 тенкĕ туса пачĕ. Кăçалхи çулăн пĕрремĕш кварталĕнче те шайкка укçи пухас плана 200 процент тултарчĕ.

Г. АКИМОВ.

Иден тухса калани

ЛОНДОН, майăн 9-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Эдинбургра Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче—Гитлер Англире хăйĕнпе мир тума хатĕр тăракан çынсем пур тесе шухăшласа йăнăш туни çинчен каланă. Пĕр çул каярах — тенĕ пек эпир тĕлĕнмелле событи пулса иртнине курнăччĕ,—тенĕ Иден.—Ун тухне «пачах та кĕтмен çĕртен чаплă Шотландие сывлăшран Гитлерăн заместителĕ, Гесс текенскер, анса ларнăччĕ. Тен, кам пĕлет, унăн та, Гитлерăнни пекех, илĕртӳллĕ, анчах йăнăш шанчăк пулнă пулĕ. Англипе Британи империйĕнчи, çавăн пекех мĕнпур пĕрлешнĕ çĕршывсенчи миллионшар çынсем Гитлерпа е национал-социалистла режимпа нимĕнле килĕшӳ те тăвас çуккине, вĕсем çак тĕлĕшпе пурте пĕр шухăш-кăмăллă пулса тĕнине Германин çав руководителĕсем хăçан ăнланса илĕççи ĕнтĕ? Пирĕн халăхăн пуçне пропагандăпа арпаштарма çук. Вăл хăйĕн решенине хăйĕн ирĕкĕпе йышăннă».

Гитлерăн сăмахĕ «çĕнĕ йĕрке» пĕтессине систерекен сăмах пек илтĕнсе кайнине кăтартса парса, Иден гитлерла Германие çĕнтернĕ хыççăн мир тăвас задачăсем çинче чарăнса тăнă. Пĕрлешнĕ нацисен çакăн пек йĕрке тумалла,—тесе кăтартса панă Иден,—çав йĕркере никам та нимĕнле агресси тума ан пултартăр, пĕр-пĕринпе ырă кӳршĕллĕ мар политика тытасси ан пултăр, «аслă çулсем çинче хурах пусасси тата вăрă-хурахла меслетсемпе ăнăçлăн усă курасси» ан пултăр. «Пирĕн,—тенĕ малалла Иден,—çакăн пек положени туса хума тăрăшмалла: çав мирлĕ системăна тĕнчери тăватă аслă держава—Британи империйĕ, США, СССР тата Китай пĕрле тытса тăччăр».

Англи войскисен Мадагаскарти операцийĕсене Иден «питех те ăнăçлă операцисем» тесе хак панă. Вăл çапла каланă: «Çав операцисем мĕнле вырăн йышăнса тăни каламасăрах паллă. Диего-Суарес Инди океанĕнчи чи лайăх портсенчен пĕри пулса тăрать. Ăна тинĕс-çар бази туса хунăччĕ, вăл тĕнĕл держависен аллинче пулнă пулсан, Кăнтăр Африкăпа Англин Хĕвелтухăç Африкăри владенийĕсене кăна мар, çавăн пекех тата эпир Австралипе, Çĕнĕ Зеландипе, Индипе тата Вăтаçĕр Хĕвелтухăçĕпе тытакан коммуникацисене те питех те хытă хăратса тăнă пулĕччĕ».

Иден малалла çапла каланă: Лондонран илнĕ сведенисем тăрăх, англичансем Мадагаскарта тунă çухатусем çинчен малтан кăтартса панă цифра юлашки вăхăтра çĕнĕ информаци илнĕ май улшăнать. Пĕр пин çын вырăнне Мадагаскарта çавăн çурри кăна пĕтни çинчен пĕлтерме кăмăллă, тенĕ Иден.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Латвире çаратаççĕ

СТОКГОЛЬМ, майăн 8-мĕш. (ТАСС). «Дейче цейтунг ин Остланд» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Латвире нумаях пулмасть Германи валли лашасем пухнă. Лашасемпе пĕрлех хресченсенчен урапасемпе ут таврашĕсене те туртса илнĕ. Оккупантсем Балтика таврашĕнчи совет республикисене вырăхсем хушшинче саралакан чир-чĕрсем илсе пынă, çавăн пирки вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе пысăк сиен кӳнĕ. Импери комиссарĕ хушнă тăрăх нимĕçсен чирлĕ лашисене хресченсен пăхас пулать. Нумаях пулмасть кăларнă приказра «лашасене чылай чухне начар пăхнине» палăртнă. Лашасем вилес-мĕн пулсан уншăн пĕтĕмпех хресчене тӳлеттересси çинчен, çавăнпа пĕрлех приказа пăхăнманнисене тĕрмене хупасси çинчен нимĕçсем малтанах приказра астутарнă.

Инди правительстви халăха чĕнсе калани

НЬЮ-ЙОРК, майăн 8-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Делирен пĕлтернĕ тăрăх, Инди правительстви хаçатсенче халăха чĕнсе каланине пичетленĕ. Унта вăл халăха вăрçă обстановкине хăюллăн кĕтсе илме, вăрçă хатĕрĕсемпе продовольстви ытларах туса кăларма, граждăнла оборонăн влаçĕсене пулăшса тăма, чугунçул тăрăх войскăсем илсе çӳрес ĕçе çăмăллатмашкăн чугунçулпа сахалтарах çӳреме, электроэнергие тата хута пекеретлеме чĕнет.

400 миллионлă халăх японецсене тытса чарма пултарать, тенĕ унта.

Гестапо палачĕсем Парижа пырса çитни

НЬЮ-ЙОРК, майăн 10-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Вишири корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Франције пырса çитнĕ Гейдрих хăйпе пĕрле Парижа Гитлерăн штурмовой отрячĕсен суйласа илнĕ бригадине илсе пынă. Бригадăна, Оберг генералпа унăн отрячĕсене, казармăсене тата нимĕçсен Францири оккупациллĕ войскисене сыхласа тăма, Франци халăхĕ тĕлĕшпе йышăнакан репрессиллĕ мерăсене пурнăça кĕртсе пыма тата Францин оккупациленĕ зонинче тăракан Германин мĕнпур полицине контрольлесе тăма хушнă. Ăна пулăшу пама гестапон инспекци начальникне Кнохене уйăрнă.

„Шурча вăрçи“ 100 çул тултарать

Чăваш халăхĕ иртнĕ ĕмĕрсенче темиçе хутчен та патша влаçне хирĕç тăрса кĕрешнĕ. Чи паллă кĕрешӳсенчен пĕри вăл май уйăхĕ вĕçĕнче 100 çул тултаракан «Шурча вăрçи» пулать.

Пăлхану 1841 çулти ноябрьте пуçланса 1842-мĕш çул пуçламăшĕнче вăйланса çитнĕ. Чи малтан хальхи Октябрьски район вырăнĕнче пулнă. Липовски вулăсри чăвашсемпе çармăссем пăлханнă. Пыра-киле пăлхав хальхи Çĕрпӳ, Вăрнар, Калинино, Советски, Сĕнтĕр тата Ишлей районĕсене кĕрекен ялсене саралса çитнĕ. 1842 çулти май уйăхĕ вĕçпелле Шурча (Акрамово) патĕнче восстани тăвакансемпе патша войскисем хушшинче çапăçусем пулса иртнĕ. Çакăнтан вара 1842 çулти восстани «Шурча вăрçи» ятне илсе юлнă. Восстание пусарнă хыççăн патша войскисем темиçе çĕр çынна тытса арестленĕ. 500 çынна ытла 100-тен пуçласа 1000 хутчен çапса хĕненĕ; нумайăшне суд туса Çĕпĕре каторгăна янă.

Шурча вăрçине урăхла тата «Çĕрулми пăлхавĕ» теççĕ. Мĕншĕн тесен вăл пăлхав патша правительстви хысна валли ирĕксĕрлесех çĕрулми лартассине хирĕç пуçланнă. «Шурча вăрçин» восстанийĕ чăваш историйĕнче хăйĕн анлăшĕпе тата вăйĕ тĕлĕшĕпе, Степан Разинпа Пугачев вăхăчĕсенчи восстанисем пекех, пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл восстание пурĕ 40 пин çынна яхăн хутшăннă.

«Шурча вăрçи» 100 çул тултарнине палăртса, Чăваш Государство издательстви П. Г. Григорьев çырнă «Чăваш хресченĕсен 1842 çулти восстанийĕ çĕр çул тултарни» ятлă брошюрăна пичетлесе кăларать.

Ирĕклĕ Францин хĕçпăшаллă вăйĕсем

ЛОНДОН, майăн 9-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: Франци офицерĕ, генерал де Голль движенийĕ майлă тăраканскер, ирĕклĕ Франци 50 çар карапĕ тытса тăрать, тесе каланă. Франципе Германи хушшинчи килĕшӳ договорне алă пуснă вăхăтра ирĕклĕ Францин аллине сутуилӳ карапĕсем пĕтĕмпе 700 пин тоннăлăх куçнă. Çак вăхăтран вара ирĕклĕ Францин суту-илӳ флочĕ пĕтĕмĕшпе 110 пин тоннăлăх карапсем çухатнă.

Ирĕклĕ Францин авиацийĕ 3 пин летчик, нумай бомбардировщиксемпе истребительсем тытать.

Французсене де Голль çумне пĕрлешме кунран кун йывăртарах та йывăртарах пулса пырать пулин те, французсен чылай летчикĕсен Франци аэродромĕсем çинчен нимĕçсен самолечĕсене илсе тарма май килнĕ. Французсен пĕр летчикĕ килĕшӳ тăрăх Итали комиссине тивекен самолета тытса илнĕ те Англи енне вĕçсе каçнă. Çĕршер французсен Ла-Манш урлă кимĕсемпе ишсе каçса Англие çитме май килнĕ. Çак тĕслĕхсем пурте Франци халăхĕ оккупантсене хирĕç тăма пултарнине кăтартса параççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ ЭРЕХ ЗАВОДНЕ
катка-пичке тума тата киввисене юсама пĕлекенсем
ВАСКАВЛĂН КИРЛĔ
Ĕçукçи—калаçса татăлнă тăрăх.
Хваттер общежитире
Столовăйра апат çитереççĕ.
Тĕплĕнтерех çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Чувашская урам, 61, эрех завочĕ, заводри главнăй инженер.

**Наркомлесу Чувашской АССР
СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ**
Для работы в аппарате Наркомлеса:
старший инженер по мехтранспорту, начальник ПСО, шофера для легковых автомашин ЗИС-101, ГАЗ-А, главный бухгалтер, начальник финотдела, инженер-технолог.
Для работы в леспромхозах и мехлесопунктах:
инженер или опытный техник-строитель, начальники и технoруки лесопунктов, инженеры и техники по лесозаготовкам, главные и старшие бухгалтера.
Желающих предъявить свои услуги просим с заявлениями обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 36, Наркомлес, Чувашской АССР или же по телефону № 3—36 в Отдел кадров.

ДЕПО КАНАШ КАЗ. ж. д.
принимает на курсы рабочих мужчин и женщин по подготовке:
слесарей, токарей, электросварщиков, помощников кочегаров и помощников машинистов.
Обучающиеся получают денежное содержание и обеспечиваются общежитием и питанием при столовой.
Желающие обучаться за справками должны обращаться в депо Канаш.

Ликвидком артели „КРАСНЫЙ МОЛОТ“
доводит до сведения всех учреждений, организаций и частных лиц о том, что сданные заказы в артель „Красный молот“ должны заказчиками немедленно, не позднее 20 мая 1942 года, выкупаться. Позднее никакие претензии приниматься не будут.
ЛИКВИДКОМ.

Папен çине „тапăннă“ пирки Анкарара пыракан судра

АНКАРА, майăн 7-мĕш. (ТАСС). Пĕрерне хушши иртнĕ хыççăн, Папен çине «тапăннă» ĕçе пăхса тухма Анкарари суд ĕнер çĕнĕрен тытăннă. Судăн çак черетлĕ ларăвĕнче айăпланакан совет гражданинĕ Павлов çак ĕçĕн пур енĕсене те, халиччен процесра пĕр-пĕр солтав тăрăх çутатса паманнисене те уçса палăртмашкăн следствие анлăрах та тĕплĕнрех туса пыма ыйтнă. Çав шутпа Павлов малтанхи следствире тĕпчемĕ тăватă свидетеле—Омерăн тăванĕсемпе тусĕсене суда чĕнме ыйтать, мĕншĕн тесен бомба çурăлса кайнă чухне вилнĕ çын кам пулнине халиччен те тĕплĕн палăртман. Прокурор çав çын Омер пулнă тесе шутлать пулсан та, ăна хирĕç, Павлов шучĕпе, çак фактсем калаççĕ: взрыв пулнă чухне вилнĕ çыннăн ӳчĕ çинче медицина экспертĕсем вара улттă уйăх е çулталăк çурă маларах ăна операци туниччен юлнă çĕвĕ тупнă. Омер тăванĕсем допросра: Омер нихăçан та операци тутарман, тесе каланă; медицина экспертĕсем вилнĕ çыннăн тăршшĕ 1 метр та 62 сантиметр, вăл 36 çулта 40 çул хушшинчи çын пулнă, тенĕ, чăннипе Омерăн çӳллĕшĕ 1 метр та 56 сантиметр, вăл 23 çулти çын пулнă; вилнĕ çыннăн урисенче Омер тăванĕсем тата свидетельсем палланă тăрăх вăл нихăçан та тăхăнса çӳремен пушмак пулнă тата ыт. те.

Бомба çурăлнипе вилнĕ çын Омер пулнине шанма çуккине палăртса тата свидетельсене суда чĕнме çине тăрсах ыйтса, Павлов çапла калать: «Турципе туслă çыхăнусем тытакан Совет Союзĕн гражданинĕ пулса, эпĕ хама хӳтĕлессипе кăна мар, унтан ытларах тата çав февралĕн 24-мĕшĕнчи провокацие тăрă шыв çине кăларассипе интересленетĕп», тет. Малалла Павлов взрыв пулнă вырăна сăнанă тăватă эксперта,—хăйсен заключенийĕнче: Ататюрк бульварĕнче бомба çурăлнине вĕлерме тапăнни тесе калани гипотеза—çирĕплетсе калама çук шухăш кăна тесе шутлама пулать текенскерсене,—суда чĕнме ыйтать. Взрыв тăвакан япала тимĕр ещĕк ăшĕнче пулнин тата унăн ăшĕнче металл татăкĕсем пулманни çинчен экспертсем çирĕплетсе каланă факта астутарса, çавăн пек япала малтанах палăртнă мĕнле те пулин тĕллеве пурнăça кĕртмешкĕн взрыв тума юрăхлă мар пулнине кăтартса парса, çавăнтах тата «вĕлерме тапăннă çын» кăна взрыв пулнипе вилни çине кăтартса парса, Павлов çакăн пек вывод тăвать: никам çине вĕлерме тапăнни те пулман тата никам та тапăнман.

Павлов суда çакăн çинчен астутарать: вĕлерме тапăнни çинчен калакан юмаха Абдурахманпа Сулейман кăна шухăшласа кăларнă, вĕсенчен пĕррешĕ, Абдурахманĕ, вара—Омер темле йывăр шухăшпа кайнă çын тĕслĕ пулнă пирки çеç вĕлерме тапăнмашкăн хатĕрленни çинчен «пĕлнипе» йышăннă, иккĕмĕшĕ, Сулейманĕ, апрелĕн 1-мĕшĕнче судра: «Папена вĕлерме тапăнни çинчен калама манăн пуçра шухăш та çук, ку ĕç çинчен эпĕ нимĕн те пĕлместĕп», тенĕ. Вĕлерме тапăнса взрыв туни çинчен калакан юмаха суд следствийĕ пынă май çирĕплетсе шаманнине кăтартса парать Павлов. «Вĕлерме тапăннă» пирки Турци влаçĕсем палăртнă чылай детальсене, сăмахран, «вĕлерме тапăннă» çынран, урăхла каласан, Папенран взрыв чылай аякра пулнине, посольствăн автомобилĕ взрыв пулнă вырăнтан çĕр метр хушши аякра тăнине астутарать Павлов. Вĕлерме тапăнни пулман, вĕлерме тапăннă пек туса кăтартни пулнă, тесе çирĕплетсе калать Павлов.

Судпа айăпланакан совет гражданинĕ Корнилов хăй енчен Сулейманăн суйнине, вăл 1941 çулти сентябрьте Анкарара Корнилова виçĕ хутчен курнă тесе суйнине, тăрă шыв çине кăларма пултаракан свидетельсене суда чĕнме ыйтать. Корнилов Анкарана чи малтанхи хут 1942 çулти январĕн 16-мĕшĕнче кăна пынă пулнă. Корнилов çавăн пекех тата дворник Кыркорпа килхуçи Абдулаха, пĕррехинче Корнилов патне Омер пычĕ тесе каласанскерсене, тепĕр хут суда чĕнме ыйтать. Çакăнпа пĕрлех Корнилов çакна асăрхаттарать: Кыркор «асран кайнă çын» пулнине медицина экспертизи палăртнă хыççăн та прокурор Кыркор палăртса панине шута илет пулсан кăна эпĕ ăна иккĕмĕш хутчен суда чĕнме ыйтатăп, тет.

Взрыв пулнă чухне вилнĕ çын çумĕнче тупнă револьвера ăçта тунине çирĕплетсе пама çук, тĕрлĕ шухăшсем тăрăх кăна ун çинчен калама пулать, мĕншĕн тесен револьвер çинче номерăн пĕр пайĕ палăрмасть, текен справкăна суд вуласа парать.

Абдурахманăн защитникĕ хăй çине совет гражданинĕсене айăплас ĕçе илнине Павлов кăтартса панă май, çав адвокат тӳрре тухма хăтланса çапла калать:

«Эпĕ хам енчен Абдурахмана хӳтĕлессине кăна мар, тата Павлова айăплассине те тума кирлĕ тесе шутлатăп, мĕншĕн тесен юлашки кунсенче ют çĕршывсен журналисчĕсем тата пĕтĕм тĕнчери пичет Павлова айăплани тĕрĕс мар теме пăхаççĕ», тет. Çав сăмахсене каласанах судья адвоката малалла калама чарать.

Прокурор, сăмах тухса каласа, Павловпа Корнилов суд следствине анлăрах туса пыма тата свидетельсене чĕнме ыйтнисене шута илмелле мар, тет. Бомба çурăлнă чухне вилнĕ çын пирки прокурор çапла калать: «Çав çын кам пулнине палласа илнĕ, ку ыйту патне каялла таврăнма кирлĕ мар» тата «çуран çĕвви пирки экспертиза йăнăшма пултарнă», тет. Кыркор «асран кайнă» çын пулнă пирки экспертсем çирĕплетсе каланă пулин те, прокурор ăна тата Абдулаха «чи лайăх свидетельсем» тесе калать.

Нумайччен канашланă хыççăн суд Павловпа Корнилов ыйтнисене, вĕсемпе килĕшни суда «нумайлăха часать» тесе, йышăнман. Çавăнпа пĕрлех Ададазар хулинчи виçĕ свидетеле тĕпчеме прокурор ыйтнине суд шута илнĕ, процеса çĕнĕрен майăн 13-мĕшĕнчен куçармалла тунă.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 788

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. [illegible]